## Чăваш сăмахĕ - пирĕн чăн-чăн çăлкуçĕ

Вăтăрмĕш çулсенчех Петĕр Хусанкай сăввисемпе поэмисем хăйсен тарăн шухăш-туйăмĕпе, сулмаклăхĕпе, янравлăхĕпе ман кăмăла тыткăнлатчĕç. Поэтăн пуян чун-чĕреллĕ, çирĕп характерлă лирикăлла геройĕ ун чухнех тĕрĕслĕхпе паттăрлăх символĕ пек туйăнатчĕ. Çав вăхăтрах Хусанкай пултарулăхĕнче гражданла пафос кунсерен хăват илсе пыма тытăнни си-сĕнетчĕ. «Çирĕм улттă» поэмăри йĕркесем халĕ те хăлхара янăраса тăраççĕ:

Kaçпи тинĕс чăнах та йĕрет-çке,
Kaçпало эс итле-ха, сăна:
Шаумян... Азизбек... Джапаридзе!..
Kaçпи тинĕс чăнах та йĕрет-çке,
Çирĕмултă ята асăнать.

Хусанти университетра вĕреннĕ тапхăрта та, çарта пулнă вăхăтра та тăтăшах Петр Петрович поэзийĕпе интересленеттĕм. Çар Академийĕнче те юратнă сăвăçăн произведенийĕсене тупса вулама тăрăшаттăм.

Тăван çĕршывшăн пынă Аслă вăрçă пуçлансан, алла пăшал тытса, фронта тухса кайрăм. Хаяр çапăçусем кăштах лăпланнă самантсенче хампа пĕрле илнĕ темиçе чăваш кĕнекине уçа-уça вулаттăм. Вĕсем хушшинче Петĕр Хусанкай сăввисен пуххи те пурччĕ.

Поэт Сталинградран Польша çĕршывĕ таран гитлерла фашистсене аркатнă. Йывăр аманнă хыççăн госпитальре выртма тивнĕ унăн. Сăмах май каласан, поляксен çĕрĕнче тăшмана хирĕç кĕрешнĕ чухне эпĕ Петр Петровичран инçех те пулман иккен.

Гитлерла вăрă-хурахсен пули мана Одер шывĕ хĕрринче ураран ӳкерчĕ. Çар госпиталĕнче чылай вăхăт сипленме лекрĕ. Çавăн чухне поэт-фронтовикăн Петĕр Хусанкайăн патриотизмла туйăмпа, гражданла хĕрулĕхпе çырнă йĕркисене вуласа хавхаланаттăм:

Десна та Сож, Нева та Днепр...
Мĕнле шыв урлă эп каçман!
Кашни хума вăрçса илетпĕр,
Илемлĕ пур тăван çыран...
Анчах ăçта пулсан та пуçăм,
Ман чунăм Атăл хĕрринче.

Поэт произведенийĕсенче мана яланах тематика анлăхĕпе сăнарлăх, шухăш витĕмлĕхĕпе çĕнĕлĕх илĕртетчĕç. Хăйĕн пултарулăхĕнче вăл чăваш сăмахĕсен эмоцилле вăйне, сĕткенлĕхне, илемне уçса кăтартма пĕлетчĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ вулакансем Петр Петровичăн тăван чĕлхене мухтаса шăрçаламтарнă сăввисене ыррăн асăнаççĕ. Талантлă сăвăç тивĕçлипех çапла калама пултарнă:

Чăваш сăмахĕ - пирĕн чăн çăлкуçĕ,
Шăнкăртатать вăл ĕмĕр-ĕмĕре.
Унпа кăна поэт хăйне çул уçĕ,
Унпа кăна вăл чĕрĕ тĕнчере...

Тăван чăваш чĕлхине чунтан-вартан юратни, унăн вăрттăнлăхĕпе асамлăхне тĕпчесе вĕренни тата вĕсемпе творчествăра анлăн усă курни ăна ытти халăхсен чĕлхисемпе, поэзийĕпе çывăхланма та çулсем уçса панă. Петĕр Хусанкай произведенийĕсене тĕрлĕрен халăхсем камăлласа йышăнчĕç. Ку тĕлĕшпе пĕр тĕслĕх илсе кăтартас килет манăн.

...1966 çулта Грузире тĕнчипе чапа тухнă Шота Руставели поэт çуралнăранпа 800 çул тултарнине паллă турĕç. Çавна май аслă уява чĕннĕ хăнасем хушшинче Петĕр Хусанкай та пурччĕ. Юбилей уявĕ уçăлас умĕн чăваш сăвăçинчен телеграмма илтĕм. Вăл Тбилиси хулине килни çинчен пĕлтерчĕ. Тепĕр кун вара хăй те пирĕн чаçе çитрĕ. Ăна

хапăл туса кĕтсе илтĕмĕр. Пирĕн салтаксемпе офицерсенчен чылайăшĕ унччenex Хусанкай ятне илтнĕ иккен.

Эпир Петр Петровича хăнана чĕнтĕмĕр. Службăри грузинсем уйрăмах хăпартланса ӳкрĕç. Вĕсем сăй тума çав тери тарават. Тĕттĕмччeнex пĕр-пĕринчен уйрăлма пĕлмерĕмĕр. Шавлă та савăнăçлă калаçу вăхăтĕнче Шота Руставелие те, ытти грузин поэчĕсене те ырăпа аса илтĕмĕр. Хусанкай чăваш çыравçисен ĕçĕ-хĕлĕ пирки чылайччен, хумханмалла каласа кăтартрĕ, хăй «Тигр тирĕпе витĕннĕ витязь» произведение чăвашла куçарма тытăнни çинчен пĕлтерчĕ. Вăл чăвашла сăвăсем вуласа панине ытарайми итлерĕç грузинсемпе вырăссем. Чăваш чĕлхин хăвачĕ сисĕнчĕ çавăнта. Калама çук ăшшăн иртрĕ çав тĕлпулу.

Петр Петрович ман хваттерте çĕр каçма кăмăл турĕ. Иркӳлĕм пире хула ĕçтăвкомĕн председателĕ телефонпа шăнкăравларĕ. Чăваш республикинчен килнĕ поэта хăй патне хăнана чĕнет иккен. Пире вăл парти райкомĕн секрета-рĕпе пĕрле кĕтсе илчĕ. Вĕсем хулари паллă вырăнсене кăтартса çӳрерĕç, чăвашлăхĕ, унăн культурипе искусстви çинчен ыйта-ыйта пĕлчĕç. Хусанкая хула варринчи пĕр хутлă чул çурт питех те интереслентерсе ячĕ. Унта вы-рăссен паллă поэчĕ А. С Пушкин çула май чарăнса тăнă. Çакăн хыççăн Петр Петрович хăйĕн Пушкина халалланă сăввине шухăшлăн та витĕмлĕн вуласа пачĕ:

Тавах: сăмах тертне тӳсме вĕрентрĕн,
Сан урăхла янран сăввусенче
Хам чунăм кĕввиех пурне пĕлсессĕн
Мĕнле кăна эп савăнмăттăмччĕ!

Хула пуçлăхĕсем, тав туса, пĕр вăхăта пире иксĕмбре хăварчĕç (вĕсен канашлу иккен!).

- Георгий шăллăм, - терĕ Хусанкай çав самантра. - Мана А. С. Пушкинăн «Пикем, тархасшăн ан юрла» сăвви канăç памасть. Эп хам та яш чухне пĕр грузинкăна тĕл пулнăччĕ.

Çакăн хыççăн вăл вăтăрмĕш çулсенче Грузире çырнă сăввисене чылайччен вуларĕ:

Сакартвело хĕвелĕ хĕрӳллĕ,
Хĕвелтен те хĕрӳ - юрату.
Тепĕр çур сехетрен тăрса юлĕ
Руставели чĕлхи... Кура, ту...
Сакартвело хĕвелĕ хĕрӳллĕ.

Каçкӳлĕм пире хула пуçлăхĕсем хăнана чĕнчĕç. Грузинсемпе чăвашсен сăвви-юррисем чылайччен шăпланмарĕç унта. Петр Петрович çав кунсенче çырнă «Грузие салам!» сăввине вулани вара пуриншĕн те чи хаклă парне пекех пулчĕ:

Грузи! Эс хăвах поэзи.
Санăн чаплă уявна
Çак сăмахăмсем вĕçеççĕ,
Тав туса пур халăхна.
Вăл мана тытса вуларĕ
Хăйĕн савнă чĕлхипе,
Çурçĕрти тусне чухларĕ
Тахçанах паллаnă пек.

Грузи! Ĕмĕр çапла пултăр
Пирĕн аслă çемьере.
Пĕр-пĕриншĕн кăмăл тултăр,
Туслăх пытăр ĕмĕре!..

Çапла, тус-тăванлă грузинсемпе вырăссем умĕнче чăваш чĕлхин сулмаклăхĕпе янравлăхне çĕнĕрен уçса кăтартрĕ юратнă поэтăмăр.

Кирек хăш вырăнта, кирек хăш наци представителĕсем хушшинче пулсан та, Петĕр Хусанкай тăван халăхăн чапĕпе мухтавне çӳле çĕклеме, чăваш чĕлхипе литературин, культурипе искусствин çитĕнĕвĕсене пропагандăлама тăрăшнă. Çакă - поэт пултарулăхĕн паха енĕ.